# «Нарспи» Сетнерсене те, Нарсписене те кĕтет



Катькас ял тăрăхĕнче кăçал 5 уйăхра иртнĕ çулхи çак вăхăтри пекех 4 хутчен туй кĕрленĕ. Нумаях мар ку. Çак хушăра иртнĕ çул кунта 11 ача çуралнă пулсан, кăçал – 5 кăна. Иртнĕ эрнере вара ку тăрăхра туй машинисем малалла ытларах та ытларах кăшкăртас шанăç çуралчĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Шомикре тĕплĕ юсав



ĕçĕсем хыççăн кафе çĕнĕрен хăйĕн алăкĕсене уçрĕ. «Нарспи» – çапла ят пачĕç ăна. Шомик тăрăхĕнчи Нарсписем хăйсен Сетнерĕсемпе тĕл пулмалли япăх мар вырăн ку. Кафе ятне чăвашла панин сăлтавне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çак çурта уçма пуçтарăннисене саламланă май уйрăммăн палăртрĕ:

–Эпир пурте – чăвашсем. «Нарспи» поэма вуласа çитĕннĕскерсем. Çавăнпа та чăвашлах пултăр кафе те. Ячĕ çеç мар, кухни те кунта чăвашсенех пулĕ. Хăнасем каланă тăрăх, кун пек чăваш ячĕллĕ чăваш апачĕпе сăйлакан кафе Шупашкарта та шыраса тупма хĕн. Эппин, пĕрремĕш те, юлашки те ан пултăр вăл. Шупашкарпа Муркаш районĕн чиккинче вырнаçнă культурăллă кану çурчĕ туслăх вырăнĕ пултăр.

Туслăх та çăмăллăнах çуралмасть пуль çав. Нарспипе Сетнер шыв хĕрринче тĕл пулса кунта пуçтарăнннă халăха кафе уçăлни çинчен пĕлтериччен вара Мăн Сĕнтĕр райпо коллективĕн самаях тар тăкма тиврĕ. Иртнĕ çулхи сентябрьте малтанхи кафе çуртĕнчен икĕ стенине çеç хăварсан, кун пек илĕртӳллĕ çурт часах хăпарса ларасса хăйсем те шутлама шикленнĕ пуль-ха. Асăннă райпо канашĕн ертӳçи Л.П. Майкова каланă тăрăх, ним çукран кермен тума пĕтĕмпе 7 миллион тенкĕ тухса кайнă тата тепĕр миллионлăх çĕнĕ оборудовани туянса вырнаçтарнă. Тинех лăш! сывласа яма май пур.

Шомик тăрăхĕнче пурăнакансемпе Мăн Сĕнтĕр райпо коллективне саламлама Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министрĕн çумĕ А. А. Быченков килчĕ.

– Финанс тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр çакăн пек çĕнĕ объектсем тăвакансем пурри, çапла майпа çĕнĕ ĕç вырăнĕсем туса пани савăнтарать, - терĕ вăл. Ĕç вырăнĕ тенĕрен, малтан кивĕ кафере пурĕ 4 çын ĕçленĕ пулсан, паян вара В.Е. Моисеева ертсе пыракан коллективра 7-ĕн вăй хураççĕ. Çапла майпа «Нарспи» тепĕр 3 çынна ĕç тупса пачĕ.

Ахалех мухтамасть çав Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В.М. Павлов та Мăнсĕнтĕрсене, Валерий Павлович Мăнсĕнтĕрсем республикăра та , Раççейре та хăйсен ĕçтешĕсем хушшинче ырă ятлă пулнине палăртрĕ.

Шомиксене çак паллă кун ячĕпе çавăн пекех Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Г.Н. Архипов, Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕнче ĕçленĕ Т.И. Михайлова, Хĕрлĕ Чутай райпо канашĕн ертӳçи А.И. Дмитриева саламларĕç.

Апла пулсан кафене хута ярас тесе тимленĕ А.В. Федоров уйрăм предпринимателĕн те черетлĕ объект ĕçлеме пуçланăшăн савăнмалла çеç. Людмила Петровнăна вăл символикăлла çăра уççи парнелерĕ.

Кафе уçăлма ĕлкĕрчĕ çеç – унпа аллаллăн тытăнса ĕçлес текенсем тупăнчĕç те.

– Эпир сирĕнпе ĕçлеме яланах хавас. Экологи тĕлĕшĕнчен таса продукципе сире яланах тивĕçтерме хатĕр, –терĕ «Рыболов» фирмăн генеральнăй директорĕ А.П. Портнов, Шомиксене пулăсем парнеленĕ май.

Шомикре, ун çывăхĕнчи ялсенче пурăнакансем те савăннă иккен кафе уçăлнăшăн. Çакă В.Г. Алаева пайщик сăмахĕнчен те курăнать:

– Пĕрре те тухас килмест кун пек хитре вырăнтан. Ку çеç те мар. Хуларан килекенсем хуларинчен те тутлăрах çитереççĕ кунта теççĕ, – терĕ вăл.

Ĕмĕрĕпех учительницăра ĕçленĕ Р.И. Поянщикова вара кафе уçăлнипе çыхăннă савăнăçа хăй çырнă сăвăра кăтартрĕ. Интересленсех итлерĕç ăна.

Хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн пурте шала кĕчĕç. Шӳрпен техĕмлĕ шăрши сарăлнă кунта. Кашни кунах çак кафере халăх тăлми пултăр, эппин.

Мăн Сĕнтĕрсен вара кафе уçнипе ĕç вĕçленмерĕ. Тепĕр куннех Мăн Сĕнтĕрти универмага реконструкцилес ĕçе пуçласси не пĕлтерчĕç. Сăмах май каласан, çулсеренех кунта çĕнĕ объектсем тума тата юсама 10 миллион тенкĕ укçа уйăраççĕ. Юлашки 5 çул хушшинче кунта 35 объекта юсанă тата 6 çĕнĕрен туса хута янă.

Апла пулсан кăлăхах иккĕленнĕ Чăвашпотребсоюзра Людмила Петровнăна райпо канашĕн председательне лартиччен «суту-илӳне пĕлет-ха, стройка ĕçĕнче пултараять-ши» тесе. Пултараççĕ иккен Мăнсĕнтĕрсем таварçаврăнăшне те тултараççĕ, объект хыççăн объект юсаççĕ, тăваççĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: кафе уçнă самант.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

# Шăрăхра шăнса ан пăсăлăр

***Çанталăк юлашки вăхăтра шăрăх тăрать. Шăпах çакнашкал вăхăтра вара çынсем чирленĕ тĕслĕхсем сахал мар тĕл пулаççĕ. Ытларах чухне тата «шăнса» пăсăлаççĕ. Çавăнпа та çынсене чирлессинчен асăрхаттарас тĕлĕшпе районти санитарипе эпидемиологи надзорĕн тĕп врачне Глафира Григорьевна ВОРОБЬЕВАНА ансат правилăсемпе кĕскен паллаштарма ыйтрăмăр.***

– Çакă вăл çынсем шăрăх вăхăтра сивĕ шывпа ытлашши усă курнипе çыхăннă. Чирленипе пĕрлех çынсем сивĕ шыва кĕрсе шăнăр туртнипе путса вилнĕ тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Ку çанталăкра эрех ĕçессинчен сыхланас пулать. Эрех ĕçнĕ пулсан вара шыва пачах кĕме кирлĕ мар.

Ачасем шыва кĕме юратаççĕ. Вĕсемпе те инкек пулма пултарать. Пĕлмен вырăнта пачах шыва кĕме юрамасть. Унсăр пуçне ачасене хăйсене ирĕккĕн кăна шыва кĕме яма тăхтамалла. Юнашар аслисем пулччăр.

Çынсем вĕрипе аптăраса ӳкни те пулма пултарать. Çавăнпа та уçă сывлăшра ытларах ирхине е каçалапа ĕçлес пулать. 25 градус ытла шăрăх çанталăкра хĕвел айĕнче ытлашши пулма кирлĕ мар. Пуç çине шывпа йĕпетнĕ алшăлли хуни те пулăшать. Уйрăмах чĕре чирĕсемпе, юн пусăмĕ ӳснипе аптăракан çынсен асăрханullă пулмалла. Врач çырса панă эмелсене вăхăтра ĕçмелле.

Ăш хыпнине вара сивĕ шывпа мар, курăксенчен хатĕрленĕ симĕс чейпе, сĕткенсемпе иртерме сĕннĕ пулăттăм. Сивĕ шывпа ăш хыпнине иртерни вăхăтлăх кăна.

## Спорт хыпарĕсем

# Вера Соколова – Раççей чемпионки

Хăвăрт утассипе Шупашкарта Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем пуçланнă. Унта Раççейри 14 регионтан 175 спортсмен хутшăнать.

Программа хĕрарăмсем 20 километрлă дистанцире вăй виçнипе пуçланнă. Чемпион титулне çĕнсе илессишĕн хăвăрт утакансем 20 спортсмен старта тухнă. Çанталăк шăрăх пулнине пăхмасăрах Ольга Михайлова стартран пуçласах мала илнĕ. Иккĕмĕш позицире вара Вера Соколова, Людмила Архипова, Татьяна Шемякина, Елена Шумкина пынă.

Пĕтĕм хирĕç тăру саманчĕ 8-мĕш километрта пулса иртнĕ. Унта Вера малта пыракана хăваласа çитсе иртсе кайма пултарнă. Çапла вара вăл 20 километрлă дистанцие ыттисене чылай кая хăварса пĕрремĕш вĕçленĕ, çăмăл атлетика енĕпе тĕнче чемпионатне хутшăнма путевка çĕнсе илнĕ. Татьяна Шемякина тата Ольга Михайлова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене тивĕçнĕ.

# Ишме те пултаратпăр иккен!

Июнĕн 9-мĕшĕнче Кӳкеç поселокĕнче шывра ишессипе ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн парнисене çĕнсе илессишĕн шкул ачисен 11-мĕш спартакиади иртнĕ. Муркаш районĕн пĕрлештернĕ команди шутĕнче Муркаш шкулĕнчи тата лицейри çамрăксем вăй виçнĕ. Вĕсене ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕсем Ю.А. Ершов тата В.Т. Моисеев ертсе пынă. Яшсем хушшинче 25 метрлă дистанцире ирĕклĕ майпа ишессипе Муркаш лицейĕнчи Руслан Иванов 2-мĕш результат кăтартнă. Ку дистанцирех хĕрсем хушшинче Муркаш шкулĕнчи Анастасия Авдеева 4-мĕш пулнă. 5–мĕш вырăнта – Муркаш лицейĕнчи Анфиса Леонтьева.

Пĕтĕмĕшле эстафетăра пирĕн район команди 2-мĕш пулнă. Командăсем хушшинче вара Муркашсем 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă.

**Хамăр инф.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления






**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» сообщает об изменении тарифов на электрическую энергию, поставляемую бытовым потребителям**

**На основании постановления Республиканской службы по тарифам от 25.05.2009 г. № 30-7/э с 8 июня 2009 года расчет оплаты за электрическую энергию, поставляемую потребителям, проживающим в сельских поселениях и многоквартирных домах, оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами, будет производиться в соответствии со следующими тарифами:**

| | |
|---|---|
| Одноставочный тариф | 1-22 руб/кВт*ч |
| Тариф дифференцированный по зонам суток | |
| Ночная зона с 23.00 до 7.00 | 0-98 руб/кВт*ч |
| Дневная зона с 7.00 до 23.00 | 1-27 руб/кВт*ч |


**Требуется бухгалтер, инженер-проектировщик. Тел.: 8-903-345-75-76. 1-3.**

**Виççĕ пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Оринин ялĕ. Тел.: 60-0-12, 8-909-300-21-81.**

**Продаю автомашину ВАЗ-2107 2001 года выпуска, цвет фиолетовый. Тел.: 8-927-992-33-04.**


**Утерянный военный билет № 0139833, выданный 04.10.1994 г. ВК Моргаушского района на имя Ильина Владимира Юрьевича, считать недействительным.**

Администрация Моргаушского района доводит до сведения гражданам, проживающим на территории района о том, что закреплен лесосечный фонд в целях заготовки древесины для собственных нужд в следующих лесничествах и объемах.

(куб.м.)

| Наименование лесхозов | Выделено – всего | В том числе хвойный и твердый лес |
|---|---|---|
| 1. Ибресинский | 700 | 200 |
| 2.Шумерлинский | 1600 | 100 |
| 3.Кирский | 500 | 200 |
| 4.Ядринский | 300 | 100 |
| 5.Красночетайский | 600 | 200 |
| Итого | 3700 | 800 |

Чтобы заключить договор купли-продажи лесного фонда вышестоящими лесничествами, следует получить справку о строительстве и наличии земельного фонда в сельских поселениях.


**Продаю земельный участок 40 соток. Дом возможно под снос в д. Хорной, ул. Козьмойская, д. 20. Все коммуникации рядом, асфальт, ровное место. Все документы готовы. Тел.: 8-917-664-68-93.**


**Участник долевой собственности Михайлов Петр Григорьевич, 14.08.1956 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, д. Шептаки, ул. Прудовая, д. 110, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 2,56 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**2. Михайлову Петру Григорьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, д. Шептаки, ул. Прудовая, д. 110.**

**Участница долевой собственности Трофимова Римма Семеновна, 10.11.1959 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, ул. Молодежная, д. 1, кв. 11, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**2. Трофимовой Римме Семеновне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, ул. Молодежная, д. 1, кв. 11.**

Коллектив военного комиссариата Моргаушского и Аликовского районов Чувашской Республики выражает глубокое соболезнование фельдшеру военного комиссариата Ермолаевой Н.В., родным и близким по поводу безвременной кончины

**ЕРМОЛАЕВА**
**Игоря Васильевича,**

начальника первого отделения военного комиссариата Моргаушского и Аликовского районов Чувашской Республики.

Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен ветстанци коллективĕ Москакассинчи ветучастокра ветфельдшер пулса ĕçлекен В.В. Кочановăн ывăлĕ

**Николай Владимирович**
**КОЧАНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 16.06.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3850.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.